*1-мӗш хушса пани*

**«Аваллăхсăр малашлăх çук»**
**республика шайӗнчи 2-мӗш фестиваль положенийӗ**

**1. Пӗтӗмӗшле калани**

1.1. Тăван чӗлхе кунне, Чăваш Республикин Экологи культурипе çут çанталăка перекетлес çулталăкне тата Раççей Федерацийӗн Çемье çулталăкне халалланă «Аваллăхсăр малашлăх çук» республика шайӗнчи 2-мӗш фестивалье (малалла – Фестиваль) пуçараканӗсем тата йӗркелекенӗсем – Чăваш Республикин вӗренӳ министерствин хушма професси вӗренӗвӗн «Чăваш Республикин вӗренӳ институтӗ» Чăваш Республикин бюджет учрежденийӗ (малалла – Чăваш Республикин вӗренӳ институтӗ) тата Чăваш Республикин Хӗрлӗ Чутай муниципалитет округӗн «Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан Хӗрлӗ Чутай вăтам шкулӗ» муниципалитет пӗтӗмӗшле вӗренӳ автономи учрежденийӗ (малалла – Хӗрлӗ Чутай шкулӗ).

1.2. Фестиваль – шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенче тата пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп/вăтам шкулсенче чăваш чӗлхипе культурине аталанма пулăшмалли, педагогсен опытне сармалли мел.

**2. Фестиваль тӗллевӗпе задачисем**

- Чăваш халăхӗн авалтан пыракан йăла-йӗркипе, сăвă-юрăллă, вăйă-ташăллă уявӗсемпе паллаштарасси;
- Ачасене тăван халăх йăли-йӗркине тытса пыма хăнăхтарасси;
- Шкул ачисен тăван халăх чӗлхипе литературине, историпе культурине вӗренес кăмăлне çӗклесси;
- вӗрентекенсен паха опытне тупса палăртасси, унпа ыттисене паллаштарасси.

**3. Фестивале хутшăнакансем**

3.1. Фестивальте Чăваш Республикин шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсен тата пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп/вăтам шкул ушкăнӗсем ăмăртаççӗ.

3.2. Хăнасен, ăмăртăва хутшăнакансен пурин те Фестиваль вӗçлениччен чăваш тумӗпе пулмалла.

**4. Фестиваль ăмăртăвӗсем**

4.1. **«Çемье йăли-йӗрки – çирӗп çемье никӗсӗ»** (вăтам е аслă классенче вӗренекенсен фольклор ушкăнӗ чăваш халăхӗн хăй тăрăхӗнчи пӗр-пӗр йăли-йӗркине кăтартса пани);

4.2. **«Халăх юрри – чунăм уççи» (**вăтам е аслă классенче вӗренекенсем чăваш халăх юррине юрлани);

4.3. **«Ай, ташлар-и ташшине…» (**шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенчи ачасем тата 1-11-мӗш классенче вӗренекенсем чăваш ташши ташлани);

4.4. **«Çӗнӗ варкăш»** (2-11-мӗш классенче вӗренекенсем хăйсем çырнă сăвăсене пăхмасăр пултаруллă каласа пани);

4.5. **«Халăх йăли – пурнăç йӗрки»** (вӗрентекенсем чăваш халăх йăли-йӗркине тӗпе хурса ирттернӗ уроксемпе урок тулашӗнчи ӗçсем ирттерни);

4.6. **«Ăста аллинче ӗç вылять»** (5-11-мӗш классенче вӗренекенсен алă ӗçӗ тума вӗрентекен ăсталăх класӗ)

4.7. **«Пирӗн çемьен юратнă чăваш апачӗ»** (проекта 1-11-мӗш классенче вӗренекен çемьепе хутшăнса хӳтӗлени).

**5. Фестиваль йӗрки**

5.1. Фестиваль 2024-мӗш çулхи нарăс уйăхӗн 17-мӗшӗнче Хӗрлӗ Чутай шкулӗнче иртет, 9:00 сехетре пуçланать.

5.2. Фестиваль çак адреспа иртет: Хӗрлӗ Чутай муниципалитет округӗ, Хӗрлӗ Чутай сали, Çӗнтерӳ лапамӗ, 3-мӗш çурт (Красночетайский муниципальный округ, с. Красные Четаи, пл. Победы, д. 3).

5.3.Фестивале хутшăнма кăмăл пуррине нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕччен soshkrchet@gmail.com электрон адреспа çыру ярса пĕлтермелле (хушса пани).

**1-мĕш секци**

**«Çемье йăли-йĕрки – çирĕп çемье никĕсĕ» ăмăрту – вăтам классенче вĕренекенсен секцийĕ**

«Çемье йăли-йĕрки – çирĕп çемье никĕсĕ» ăмăртура вăтам классенче вĕренекен ачасем чăваш халăхĕн пĕр-пĕр йăли-йĕркине кăтартса параççĕ.

**Хаклав.** Конкурса вăтам классенче вĕренекен ачасен ушкăнĕ хутшăнать. Ушкăнра **7-9** ачаран ытла пулмалла мар. 7-10 минут хушшинче чăваш халăхĕн пĕр-пĕр йăлине кăтартса памалла. Жюри членĕсем ачасем тĕрĕс те илемлĕ калаçма пĕлнине, хăйсене сцена çинче тивĕçлĕ тытнине, ачасен тумĕпе йăла-йĕрке содержанийĕ килĕшсе тăнине хаклаççĕ.

**Чыслав.** Уйрăм çĕнтерӳçĕсене ĕнентерӳ хучĕсемпе (сертификатсемпе), дипломсемпе чыслаççĕ, çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ ушкăна парне кĕтет.

**2-мĕш секци**

**«Халăх юрри – чунăм уççи» ăмăрту– вăтам тата аслă классенче вĕренекенсен секцийĕ**

«Халăх юрри – чунăм уççи» ăмăртура вăтам тата аслă классенче вĕренекен ачасем чăваш халăх юрри юрласа параççĕ. Жюри членĕсем ачасем тĕрĕс те илемлĕ юрлама пĕлнине, хăйсене сцена çинче тивĕçлĕ тытнине, ачасен тумĕ юрăпа килĕшсе тăнине хаклаççĕ.

**Хаклав.** Конкурса вăтам тата аслă классенче вĕренекен ачасем хутшăнаççĕ. Кашни шкултан 1 е 2 ача хутшăнать.

**Чыслав.** Кашни çынна (ушкăна) ĕнентерӳ хучĕсемпе (сертификатсемпе), çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе чыслаççĕ.

**3-мĕш секци**

**«Ай, ташлар-и ташшине…» ăмăрту – шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче, 1-11-мĕш классенче вĕренекенсен секцийĕ**

«Ай, ташлар-и ташшине…» ăмăрту шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче, 1-11-мĕш классенче вĕренекенсем чăваш ташшине ташлаççĕ.

***Хаклав.*** Конкурса хутшăнакансем мăшăрпа е ушкăнпа ташлаççĕ. Жюри членĕсем ачасем тĕрĕс те илемлĕ ташлама пĕлнине, хăйсене сцена çинче тивĕçлĕ тытнине, ачасен тумĕ юрăпа килĕшсе тăнине хаклаççĕ.

**Чыслав.** Кашни ушкăна ĕнентерӳ хучĕсемпе (сертификатсемпе), çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе чыслаççĕ.

**4-мĕш секци**

**«Çĕнĕ варкăш» ăмăрту – 2-11-мĕш классенче вĕренекенсен секцийĕ**

«Çĕнĕ варкăш» ăмăртура 2-11-мĕш классенче вĕренекен чăвашла сăвă çырса пăхма сăркаласа параççĕ.

***Хаклав.*** Конкурса кĕçĕн, вăтам тата аслă классенче вĕренекен ачасем хутшăнаççĕ. Кашни шкултан чăвашла çырма пĕлекен чи пултаруллă 1-3 вĕренекен хутшăнать. Сăвă темисем: «Çемье – пурнăç тĕрекĕ», «Чĕр чунсем – пирĕн туссем», «Çут çанталăк – тупра, эсĕ ăна упра».

**Чыслав.** Кашни ачана ĕнентерӳ хучĕсемпе (сертификатсемпе), çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе чыслаççĕ.

**5-мĕш секци**

**«Халăх йăли – пурнăç йĕрки» ăмăрту**

«Халăх йăли – пурнăç йĕрки» ăмăртура тĕп тата вăтам шкулсенче вĕрентекесем хутшăнаççĕ. Тĕп тĕллевĕ – чăваш халăх йăли-йĕркине тĕпе хурса ирттернĕ уроксемпе урок тулашĕнчи ĕçсене ачасемпе ирттересси. Конкурса тĕрлĕ предметпа вĕрентекенсем хутшăнаççĕ.

*Хаклав.* Урока е урок тулашӗнчи ӗҫе йӗркеленине, темӑна интереслӗ те кӑсӑклӑ пама пултарнине, тӑван халӑх историйӗпе культурине заняти темипе ҫыхӑнтарма пӗлнине, вӗрентекен пуплевӗн пахалӑхне, чӑвашла тӗрӗс те таса калаҫма пултарнине, занятире тӗрлӗ меслетпе усӑ курма, ачасене хавхалантарса ӗҫлеттерме пӗлнине хаклаҫҫӗ.

**Чыслав.** Кашни вӗрентекене ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), ҫӗнтерӳҫӗсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ.

**6-мӗш секци**

**«Ӑста аллинче ӗҫ вылять» ӑмӑрту**

«Ӑста аллинче ӗҫ вылять» ӑмӑртура 5-11-мӗш классенче вӗренекенсем ӑсталӑх класӗ кӑтартаҫҫӗ.

*Хаклав.* Ӑсталӑх класне кӑтартакан шкул ачи вӗтӗ шӑрҫаран, тӗрлӗ тӗслӗ ҫипрен, чустаран, ҫут ҫанталӑк материалӗнчен (ҫӑмран, хупӑран, хулӑран, йывӑҫран, ӳсен-тӑрантан ) тунӑ ал ӗҫӗн йӗркине уҫӑмлӑн каласа парса е презентацилесе хутшӑнакансене ӗҫлеттерме пултарнине, ӗҫ пахалӑхне, хӑйне евӗрлӗхне кура хаклаҫҫӗ.

**Чыслав.** Кашни ачана ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), ҫӗнтерӳҫӗсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ.

**7-мӗш секци**

**«Пирӗн ҫемьен юратнӑ чӑваш апачӗ» ӑмӑрту**

«Пирӗн ҫемьен юратнӑ чӑваш апачӗ» ӑмӑртура 1-11-мӗш классенче вӗренекен ача хӑйӗн ҫемйипе чӑваш апатне пӗҫернине (хатӗрленине) кӑтартса парать.

*Хаклав.*Конкурсра хутшӑнакансен апачӗсене жюри членӗсем тутанса хаклаҫҫӗ.

**Чыслав.** Кашни ачана ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), ҫӗнтерӳҫӗсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ.

**6. Фестиваль пӗтӗмлетӗвӗ, чыславӗ**

6.1. Фестиваль пӗтӗмлетӗвӗ тата ҫӗнтерӳҫӗсене чыслани нарӑс уйӑхӗн 17-мӗшӗнче Хӗрлӗ Чутай шкулӗнче иртет.

6.2. Жюри членӗсем ҫӗнтерӳҫӗсене конкурс хаклавӗсене шута илсе палӑртать, пӗтӗмлетӗве протокола ҫыраҫҫӗ. Ӑна жюри председателӗ е ун ҫумӗ алӑ пусса ҫирӗплетет.

6.3. Фестивале хутшӑнакансене протоколсене кӑтартмаҫҫӗ. Фестиваль пӗтӗмлетӗвӗсем пирки апелляци йышӑнмаҫҫӗ.

6.4. Фестивале хутшӑнакансене пурне те ӗнентерӳ хучӗ (сертификат) параҫҫӗ.

6.5. Ҫӗнтерӳҫӗсене диплом парса хавхалантараҫҫӗ. Кашни ӑмӑртура 3 вырӑн (ӳсӗмсем тӑрӑх) палӑртаҫҫӗ.

6.6. Фестивале ирттерекен ен ӑмӑртӑва хутшӑнакансен автор прависене Раҫҫей законӗсене пӑхӑнса сыхлать.

6.7. Фестиваль пӗтӗмлетӗвӗпе Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн тата Хӗрлӗ Чутай шкулӗн сайчӗсенче паллашма пулать.

**7. Тӑкаксемпе ҫыхӑннӑ ыйтусем**

7.1. Чыславпа ҫыхӑннӑ тӑкаксене Хӗрлӗ Чутай шкулӗ хӑй ҫине илет.

7.2. Фестивале хутшӑнакан ушкӑнсем (шкулсемпе ача пахчисем) ҫул укҫи тата апатланупа ҫыхӑннӑ тӑкаксене хӑйсем ҫине илеҫҫӗ.

**8. Ыйтса пӗлмелли телефонсем**

8-987-120-33-45 – Архипова Вероника Николаевна, Хӗрлӗ Чутай шкулӗн директор ӗҫӗсене тӑваканӗ

8-917-663-75-94 – Ярускина Светлана Вадимовна, Хӗрлӗ Чутай шкулӗн директор ҫумӗ

8-927-859-93-78 – Мидакова Наталья Васильевна, Хӗрлӗ Чутай шкулӗн директор ҫумӗ

8-965-686-52-08 – Васильева Марина Николаевна, Хӗрлӗ Чутай шкулӗн чӑваш чӗлхипе литератури вӗрентекен

8-967-794-66-46 – Егорова Анна Семёновна, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедри ертӳçин ĕçĕсене тăваканĕ

**«Аваллăхсăр малашлăх çук»**
**республика шайĕнчи 2-мĕш фестивале хутшăнассине пĕлтерни**

| | | |
|---|---|---|
| **«Çемье йăли-йĕрки – çирĕп çемье никĕсĕ»** ăмăрту | Ушкăн ячĕ, ачасен шучĕ, ÿсĕмĕ, класс | |
| | Йăла-йĕрке ячĕ | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Ертсе пыракан ячĕ, телефон номерĕ | |
| **«Халăх юрри – чунăм уççи»** ăмăрту | Вĕренекен ячĕ | |
| | Ÿсĕмĕ, класс | |
| | Юрă ячĕ | |
| | Ертсе пыракан ячĕ, телефон номерĕ | |
| **«Ай, ташлар-и ташшине…»** ăмăрту | Ушкăн ячĕ, ачасен шучĕ, ÿсĕмĕ | |
| | Ташă ячĕ | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Ертсе пыракан ячĕ | |
| **«Çĕнĕ варкăш»** ăмăрту | Вĕренекен ячĕ, сăвă ячĕ, ÿсĕмĕ, класс | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Вĕрентекен ячĕ, телефон номерĕ | |
| **«Халăх йăли – пурнăç йĕрки»** ăмăрту | Вĕрентекен ячĕ, заняти теми, суйласа илнĕ класс ÿсĕмĕ | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Телефон номерĕ | |
| **«Ăста аллинче ĕç вылять»** ăмăрту | Вĕренекен ячĕ, ăсталăх класĕн ячĕ, ÿсĕмĕ, класс | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Ертсе пыракан ячĕ | |
| **«Пирĕн çемьен юратнă чăваш апачĕ»** ăмăрту | Проект ячĕ | |
| | Проект авторĕсем | |
| | Шкул ячĕ | |
| | Проекта хÿтĕлекен ячĕ, телефонĕ, ÿсĕмĕ, класс | |

**АСĂРХАТТАРНИ**
***Ачасен ÿсĕмĕ:***

1. Шкулчченхи вĕренÿ организацийĕсенче вĕренекенсем
2. Пуçламăш классенче в ĕренекенсем
3. 5-8-мĕш классенче вĕренекенсем
4. 9-11-мĕш классенче вĕренекенсем